* * *

Тупăк çинче караççĕ тейĕн парăс
Лукинăн чи юратнă кĕввинчен:
Вун пилĕк сĕрме купăсçă пĕр харăс
Хĕлле çӳрет палан уçланкинче.

Пуçне таять, пуçне усать паланĕ,
Епле шеллет вăл композитора,
Палан чунне тек кам ун пек ăнланĕ,
Кам тепĕр юрă çырĕ çав шайра?

Хăй алăкне яр уçнă Çĕр-аннемĕр,
Килсем, ачам, тет ылтăн ывăлне, —
Сăваплă иртрĕ сан хăналăх ĕмĕр,
Пуçла вырма яланлăх анине.

Анать Лукин ачашшăн та типтерлĕн,
Кĕç тупăк витĕнет тăпрапалан.
Шур юр çинче – чĕр юн пекех хĕп-хĕрлĕ —
Йĕрет пĕр сассăр хурлăхлă палан.

5.04.2006 ç.